## Халăхăмăр юратнă юрăç

Хăш вăхăтра ĕлкĕрет-ха çын çавăн чухлĕ ĕç тума! Юрăсемпе хорсем кăна сакăр çĕре яхăн кĕвĕленĕ Филипп Миронович. Калама кăна çăмăл: вĕсен кашнин уйрăм кĕвĕ, уйрăм сăнар, уйрăм гармони, уйрăм шухăш. Тата çакă та тĕлĕнтерет: композитор юрри-кĕввисем яланах çамрăк – аллă çул ĕлĕкрех çырнисем те, ĕнер-паян хайланисем те. Акă, сăмахран, «Çамрăксен юррине» илер-ха. Ăна кĕвĕленĕренпе миçе теçетке çул иртсе кайрĕ ĕнтĕ, анчах вăл çаплах кивелме пĕлмесĕр çĕнĕлле шăранать. Ахальтен мар-тăр Чăвашрадио хăçантанпа ĕнтĕ кашни кунах хăйĕн ĕçне çак юрă кĕввине янратса пуçлать. Анчахрах кĕвĕленисенчен вара «Уçланкăри палан» юрра асăнмалла. Çиçĕм пек хăвăрт сарăлчĕ вăл халăх хушшинче. Акă ăçта вăл кивелме-сӳнме пĕлмен творчество çулăмĕ. Ячĕшĕн мар çав, хăйĕн ĕçĕнчи çамрăклăх хĕлхемĕ çинчен сăмах хускатсан: «Юрăра хальхи вăхăтра çынсене хумхантаракан темăсене çĕклесси манăн творчествăн тĕп тĕллевĕ пулнă, малашне те çапла пулĕ», — тет вăл. Çакна çирĕплетсе пама тĕрлĕ вăхăтра çырнă хăш-пĕр юрăсен ячĕсене асăнса хăварни те çителĕклĕ. Акă вĕсем: «Çĕршывăм, савăн!», «Юрлать колхозлă ял», «Ешерет Чăваш çĕршывĕ», «Тăван çĕршыв чи юратни», «Чун юрлать», «Салам, Мускав», «Шупашкар», «Тăван уйсем-хирсем» т.ыт.те. Çĕкленӳллĕн янăраççĕ вĕсем пирĕн кулленхи пурнăçра. Юрă-кĕвĕ ăрăмçи пирки каланă чухне унăн тарăн лирикăпа тулнă хайлавĕсене асăнмасăр иртме çук. Вĕсем паянхи каччăсемпе хĕрсене те, пурнăç çулĕ çине тахçанах тухнă çулланнă çынсене те, чи ырă вăхăтсене аса илтерсе, чĕрере пыл пек тутлă туйăм çуратаççĕ. Кам кăна киленсе итлемен е юрламан пулĕ, сăмахран, «Çутă ĕмĕт», «Сирень», «Кăвак конвертлă çырусем», «Ан васка», «Ыранччен, чун савни, ыранччен», «Шурă роза», «Телейлĕ туслăх», «Такăрлатăп урама» юрăсене. Çакнашкал сочиненисене шута илсе ĕнтĕ СССР композиторĕсен пиллĕкмĕш съездĕнче Т. Хренников, РСФСР композиторĕсен тăваттăмĕш съездĕнче Р. Щедрин Ф. Лукина пирĕн çĕршыври чи ăста композитор-юрăçăсемпе танлаштарнă.

Филипп Миронович Лукин 1913 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче Красноармейски районĕчи Çавалçырмара çуралнă. Чатукассинчи пуçламăш, унтан Ишекри тулли мар вăтам шкулта вĕреннĕ. Шăпах Ишекре вĕреннĕ вăхăтра ĕнтĕ унăн чунĕнче музыка искусствин хĕлхемĕ çуталма тытăннă. Ун чухне шкул директорĕнче

Г.С. Сергеев ĕçленĕ. Вăл хăй тĕллĕн вĕреннĕ музыкант тата фольклорист пулни Ф. Лукин пурнăçĕнче паллă вырăн йышăнса тăрать. Г.С. Сергеев ачан музыка енĕпе çутçанталăк парнеленĕ пысăк туйăм пуррине асăрханă. Шкул директорĕ канаш панипех 13—14 çулхи ача Шупашкарти музыка шкулĕнче вĕренме тытăнать. Ун чухне вĕсене чăвашсен паллă музыканчĕсем Ф. Павловпа В. Кривоносов музыка теорине вĕрентнĕ, чăваш халăх юрри-кĕввисене тишкерме хăнăхтарнă. Пулас композиторăн пирвайхи юрри-çеммисем те вĕсем ертсе-сăнаса пынипех çуралнă.

1929 çулта хулари музыка шкулĕнчен музыка техникумĕ туса хурсан, Ф.П. Павлов унта юрă-кĕвĕ çырма туптанакансенчен уйрăм кружок йеркелет. Çав пĕрлешӳре ĕнтĕ Ф. Лукин композицири пĕрремĕш утăмсене тăвать. Чăвашсен профессиллĕ музыкин никĕсне хываканĕ вĕрентсе пынипе композиторăн чи хаклă енĕсенчен пĕри — халăх творчествине тарăн тĕпчесси, унран вăй илесси тĕвĕленет. Пуриншĕн те паллă: халăхăн иксĕлми творчестви çинче аталанакан ăсталăх кăна чăн-чăн çирĕп çунат хушма пултарать. Ку енĕпе Ф. Лукин хăйне телейлĕ тесе шутлать. Ахальтен мар унăн пирвайхи юррисенчех автор çĕнĕ пурнăç таппине çивĕч туйма пултарни уçăмлă сисĕнет. Нумай ĕçлеме тăрăшакан çамрăк музыкант каярахпа П.И. Чайковский ячĕпе хисепленекен Мускаври консерваторирен вĕренсе тухать.

1942—1956 çулсенче Ф.М. Лукин — Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕн художествăлла руководителĕ тата тĕп дирижерĕ, 1957—1959 çулсенче — Чăваш патшалăх филармони директорĕ тата художествăлла руководителĕ. Çав вăхăтрах вăл хăйĕн творчествăри ĕçне общество пурнăçĕпе тачă çыхăнтарать. Ăна темиçе хутчен те Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн депутатне, КПСС Чăваш обкомĕн членне суйланă. Ф.М. Лукин — РСФСР Патшалăх премийĕ парас енĕпе ĕçлекен комисси членĕ, вăтăр çула яхăн Чăваш АССР композиторĕсен Союзĕн правленине ертсе пынă.

Ф.М. Лукин творчестви нумай енлĕ. Тематика енĕпе те композитор пултарулăхĕ анлă. Унăн творчествинче Ленин, парти, Тăван çĕршыв, ĕç, мир çинчен кĕвĕленĕ юрăсем уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Композитор пирĕн халăхăн пурнăçне, унăн ĕçĕпе ĕмĕтне лайăх курса-пĕлсе тăрать.

Ачасене те манмасть аксакал. Вĕсем валли вăл çĕре яхăн юрă-кĕвĕ çырнă. Сăмахран, шкул ачисен концерчĕсенче час-часах «Пире парти ӳстерет», «Эпир совет ачисем», «Пионер маршĕ», «Ӳссен эсĕ кам пулан?» юрăсене тăтăшах илтме пулать.

Ф.М. Лукин чăваш халăхĕн 150 юррине çырса илнĕ, нумайăшне хорпа е пĕччен юрлама илемлетнĕ. Тĕслĕхшĕн çаксене асăнса хăварăпăр: «Шур перчетке», «Чĕнтĕрлĕ кĕпер», «Вăйă юрри», «Ĕçри тантăшсем». Вĕсене композитор иккĕмĕш ĕмĕр парнелерĕ тесен те йăнăш пулас çук.

Музыка ăстин сочиненийĕсене тишкерсе Ю. Илюхин музыковед çапла çырать: «Филипп Лукин юррисенче шăранса тухакан илемлĕ кĕвĕ лăпкă юхăмпа пĕр тытăнчăксăр аталанать. Вăл яланах витĕмлĕ сăнара палăртать, чуна ачашлать. Çакăнта ĕнтĕ композитор çырнă юрăсен тыткăна илекен вăйĕ. Автор вĕсенче совет композиторĕсен юрă пултарулăхĕнчи чи лайăх традицийĕсене аталантарса, чăваш музыкинчи хальхи вăхăтри юрă стильне çирĕплетет».

Ф.М. Лукин чăваш совет музыкине камерлă произведенисемпе пуянлатрĕ. Вĕсене автор сĕрме купăспа, виолончельпе, кларнетпа, гобойпа, валторнапа тата ытти инструментсемпе калама кĕвĕленĕ. Камерлă сочиненисем те, унăн юррисем пекех, кĕвĕ илемĕпе, çутă гармонипе палăрса тăраççĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем тĕнчипе паллă музыкантсен — Э. Грач, В. Жук, Л. Евграфов, А. Любимов, В. Галкин тата ытти ăстаçăсен репертуарне кĕрсе чикĕ леш енче те янăрама тивĕçлĕ пулчĕç.

Çапла, чăнах та пĕтĕм вăйне парса ĕçлет композитор, пĕтĕм пурнăçне халăха халаллать вăл. Çак пысăк ĕçсемшĕн ĕнтĕ ăна РСФСР халăх артисчĕн, Чăваш АССР тата Дагестан АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕн хисеплĕ ячĕсене панă, унăн ăсталăхне 1952 çулта СССР Патшалăх премийĕпе хакланă. Вăл нумай орденсемпе медальсем илме тивĕçлĕ пулнă.

Музыкăна, юрра-кĕвве юратакансем талантлă композитор малашне те пире çĕнĕрен те çĕнĕ, пирĕн пурнăça витĕмлĕ сăнлакан, ĕмĕр çамрăк чунăмăрсене килентерекен юрăсемпе савăнтарасса шанаççĕ.

*Геннадий Маркиянов.*

Тăван Атăл, 1988. 7 №. 71 с.